Пенси ыйтăвёсемпе

Çулталăкран пенсисем икё хут ӳсёç

Ёç пенсийён вăтам виçи 2010 çулталăк тёлне икё хут ӳсмелле, 2020 çул тёлне пенсионерсен пурăнма кирлё минимумён виçё минимумёпе танлашмалла. Кун пирки Раççей Федерацийён премьер-министрё В. Путин РФ Правительствин ларăвёнче октябрён 1-мёшёнче пёлтернё.

«Пенси фончёсенче пухăнса пыракан çак укçа-тенкёне шута илес пулсан, малашнехи вăхăтра пенсисем çине пухăнакан укçа-тенкён калăпăшё инфляцирен малта пымалла,– палăртнă вăл.– Çапла вара 2010 çул тёлне ёç пенсийён вăтам виçи, 2008 çулпа танлаштарсан, икё хута яхăн ӳсет».

2009 çулта ёç пенсийён база пайне икё хут ӳстереççё – мартăн 1-мёшёнче тата декабрён 1-мёшёнче. Пётёмёшле шутласан, 37,1 процент. Пенсин страхланă пайне 2009 çулхи апрелён 1-мёшё тёлне 15,6 процент чухлё индексацилеççё. Çулталăк вёçленнё тёле вара социаллă пенсин вăтам виçи пенсионерăн пурăнма кирлё минимумёнчен кая пулмалла мар.

Премьер-министр палăртнă тăрăх, совет тапхăрёнче ёçленисем те тимлёхсёр юлмёç. 2010 çултан тытăнса 2002 çулччен илнё пенси прависене 10 процент чухлё индексацилеççё. Кунпа пёрлех 1991 çулччен ёçленё кашни çул стажёшён 1 процент хушма индексаци пулать.

2010 çултан тытăнса пенсие тухакан çынсем валли вара вёсен ёç стажё 30 çултан кая мар пулсан, пенси виçи 40 процентран кая пулмасть. В. Путин палăртнă тăрăх, пенсисемпе ёç укçисен çакăн пек шайлашăвё Вăтам Европа тата Пётём тёнчери ёç йёркелёвён стандарчёсене тивёçтерет.

Çак тёллеве пурнăçа кёртме пёрлехи социаллă налукран обязательнăй пенси страхованийён пёрлехи ставкиллё налукё çине куçма йышăннă. Компанисем Раççей Пенси фондне ёçлекенён çулталăкри ёç укçин 26 проценчё чухлё – 415 пин тенкё таран тӳлесе тăрёç. Çулталăкри ёç укçи виçи унран ытларах пулсан уншăн страховани взносне тӳлемелле пулмасть. Ку суммăна çёр-шыври вăтам ёç укçи шайё ӳссе пынă май индексацилеме пăхнă.

В. Путин çапла ăнлантарнă. Отрасль тытăмлăхне пăхмасăрах пур предприятисене те страховани взносёсене тӳлемелли çёнё йёрке çине куçарма палăртнă. Ятарлă налук режимёпе усă курак-сенне вара страховани взносёсен тарифёсем ӳснине федераллă бюджетран саплаштарёç. Сăмах экономикăн пысăк технологиллё секторёнче ёçлекен пёчёк бизнес предприятийёсем пирки. Ятарлă режимсем ял хуçалăх продукцине туса илекенсем валли те пăхса хунă. Ку норма вара 5 çулхи куçăмлă тапхăрта вăйра пулё.

РФ Пенси фончён районти управленийё.

Районти пёчёк тата вăтам предпринимательство предприятийёсен субъекчёсене пёлсе тăма!

Пёчёк тата вăтам предпринимательство предприятийёсен субъекчёсен ёçне-хёлне тёрёслев органёсем тёрёслесе тăнă чухнехи административлă чикёсене тата коррупцие чакарас тёллевпе район администрацийён пёчёк тата вăтам предпринимательство координаци канашён çитес ларăвёнче пăхса тухма пёчёк тата вăтам предпринимательство предприятийёсен субъекчёсен представителёсенчен сăмахпа каласа е çырупа çырса заявленисем йышăнаççё.

Хăвăрăн ыйтусемпе район администрацийён экономика пайне 310, 311, 314 кабинетсене пыма е 2-13-41, 2-13-39, 2-22-45 телефонсемпе 2008 çулхи ноябрён 1-мёшёччен шăнкăравласа пёлтерме ыйтатпăр.

Пулас пенсионерсем валли

Хушма страховани взносёсем пирки

Кăçалхи октябрён 1-мёшёнчен тытăнса Раççей гражданёсен ёç пенсийён хушăнса пыракан пайё çине хушма страховани взносёсем хывнипе пулас пенси виçине палăрмаллах ӳстерме май пулса тăчё. Çакна патшалăх та хăй енчен укçа-тенкё уйăрса пулăшать.

Çавна май ку ыйтусемпе РФ Пенси фончён районти управленийён ёçченёсем ёç коллективёсемпе, ял çыннисемпе тёл пулаççё, уçă алăксен кунёсене ирттереççё.

Консультаци пункчёсенче тёл пулусем ирттермелли унччен палăртнă графикёнче улшăнусем пур. Тёл пулусем малашне çак графикпа килёшӳллён пулса пырёç:

Йышăну кунё	Вăхăт	Консультаци пункчё
16.10.2008	10.00–12.00	Катькас ял тăрăхё
17.10.2008	10.00–12.00	Уйкас Янасал ял тăрăхё
20.10.2008	10.00–12.00	Социаллă политика управленийё
27.10.2008	10.00–12.00	Мăн Сёнтёр ял тăрăхё
27.10.2008	13.00–15.00	Мăн Хураçка ялёнчи библиотека (Мăн Сёнтёр ял тăрăхё)
30.10.2008	10.00–12.00	Районти тёп библиотека

Кун пек тёл пулусем Юнкă ял тăрăхёнче 2008 çулхи октябрён 7-мёшёнче, Ильинка ял тăрăхёнче октябрён 13-мёшёнче иртрёç те ёнтё.

Е. АЛЕКСАНДРОВА,
РФ Пенси фончён районти управленийён пуçлăхё.

Пирён ентеш

Телекăларăмсен ертӳçинчен – сăвă кёнеки

Муркаш районёнчи Вăçкасси ялёнче çуралса ӳснё Олег Прокопьева республикăра пёлмен çын çук та пулё. Вăл, чăваш телевиденийёнче вăй хураканскер, кунран-кун пире уçă та илемлё сассипе тёрлёрен хыпарсем пёлтерсе тăрать. Нумай пулмасть вара пирён ентеш хăйён сăввисен кёнекине пичетлесе кăларма пултарчё. «Шыв çинчи сар хёвел çулёпе» – çак ятпа тухнă вăл.

Хăйён кёнекине автор пёрремёш хут Муркаш районёнчех презентацилерё. Кашмашри Культура çуртёнче культура ёçченёсем хапăлласах йышăнчёç талантлă Муркаш каччин кёнекине. Илемлё кёнекере сăввисем те питё илемлё, тарăн шухăшлă. Вёсем темёнле лăпкăлăх, ăшă туйăм парнелеççё.

«Ман сăввăмсенче эсир мён çине те пулин е кам çине те пулин тарăхса çырнине тупаймастăр. Ятлаçса, кёвёçсе çырни те çук», – тет пултаруллă автор. Каланине çирёплетме темиçе сăвă вуласа пачё. Вăл каланипе вара пурте пёр сăмахсăрах килёшрёç. Шеллесе, мухтаса, юратса, савса çырни кёнекере пайтах. Кёнекере эротикăлла сăвăсене çырма пăхни те палăрать. Ăна сăвăç хăй те хирёçлемест.



Пысăках мар калăпăшлă кёнекере темён пирки те çырса пама пултарнă автор, сăвăсене ултă ярăма уйăрнă. Пур сăвви те хăйне май кёвё пек илтёнет, вёсем шыв юххи пек «шăнкăртатаççё». Ахальтен мар ёнтё Г. Волков ăсчах Олег Прокопьев сăввисене вуланă хыççăн чăваш поэзийё пурăннине туятăп тесе каланă.

Мён пёчёкрен сăмахлăх туйăмне пёлсе ӳснё Олег Прокопьевăн сăввисем никама та кăсăклантармасăр хăвармёç.

Н. НИКОЛАЕВА.

Сăн ӳкерчёксенче: Олег Прокопьев черетлё сăвă шăрантарать; акă вăл – çёнё кёнеке.

Автор сăн ӳкерчёкё.

Пирён пата çыраççё

«Сада кёрсен мён сас лайăх?

Кайăк-кёшёк сасси лайăх», – тесе юрлатчё Ираида Вдовина юрăçă. Москакасси ялёнче вырнаçнă «Колокольчик» ача сачён ёçченёсем вара çак юрра тепёр майлă юрлаççё.

«Сада кёрсен мён сас лайăх?

Ача-пăча сасси лайăх», – теççё вёсем.

Чăн та, «Колокольчикра» ачасем сахал мар. Паянхи куна 5 ушкăна 110 ача çӳрет. Хальхи вăхăтра 15 çул ытла ертӳçёре ёçлекен Александра Алексеевна Филиппова 6-мёш ушкăн уçас ыйтупа тимлет. Ача садёнче талăкёпех ёçлекен ушкăн та йёркеленё ёнтё. Вăл пурри ашшё-амăшёсемшён питё меллё. Асăннă ушкăн 3 çул каялла уçăлнă. Унта Калайкасси, Тереç, Рыккакасси, Атапай тата ытти ялсенчи ачасем хаваспах юлаççё. Юлмасăр, вёсем валли кунта интересли питё нумай. Сăмахран, ачасем валли ятарлă вылямалли пӳлём пур. Унта телевизор, тёрлё магнитофонсем, темён тёрлё тетте, вăйăсем ирттермелли тёрлё хатёрсем нумай.

Кăçал пирён ача садёнче районти çурçёр округёнче вырнаçнă ача сачёсем тата шкулсенчи пуçламăш классенче вёренекенсем валли ятарлă логопункт уçалё. Ăна ертсе пыма Алина Вячеславовна Васильевана шанса парас тетпёр. Çак аслă пёлӳллё специалист ачасене пулăшу парасса шанатпăр.

Ашшё-амăшёсем ачисене кунта ёçлекен акăлчан чёлхин тата ташă ушкăнёсене яма тăрăшаççё. Хăйсен пепкисен пуласлăхёшён паянах шутлани питё лайăх.

Кёр çитнё май ача садёнче те вёренӳ çулё пуçланчё темелле. Ачасене пёлӳ парассине 1 категориллё икё воспитатель, 2 категориллё виçё воспитатель тата ытти тăрăшуллă воспитательсем пурнăçласа пыраççё.

«Колокольчикри» воспитательсем ачасене ӳстерсе аталантарас ёçре тёрлё программăсемпе усă кураççё. Сăмахран, Г.А. Трихалкинапа П.Г. Лебедева воспитательсем «Сообщество» программăна тёпе хурса икё кăларăм турёç.

Паллă ёнтё, ача сачёсенче ытларах хăрарăм-специалистсем ёçлеççё. Хёрарăм тени вара килте те, ёç вырăнёнче те илем кӳме юратать. «Колокольчикăн» алăкёсене уççанах хёлён-çăвён ешерекен чечексен кётесё те çакăн çинченех калать.

Ачасем тёрлё уявсем ирттерме музыка залне пуçтарăнаççё. Ăшшё-амăшёсем те кунта час-часах утренниксене килеççё. Нумаях пулмасть çак зала вёсем пулăшнипе юсаса çёнетрёмёр. Халё унтан тухас та килмест.

Каламалла, пирён патра вёрентӳ, воспитани ёçне туса пыма пулăшакансем пурте çанă тавăрсах ёçлеççё. Сентябрён 26-мёшёнче вара ача садёнче ёçлекенсен уявё ячёпе çак хастар ёçлекенсене грамотăсем парса чысларёç.

Ялкăштăрах çут хёвелё
Янкăр çутă тӳпере!
Ёçлетёрех ача сачё
Çапла ёмёр-ёмёрех!

В. МАКАРОВА,
«Колокольчик» ача сачён музыкăна вёрентекенё.

Эп чăваш

Эп чăваш, чăваш атте,
Чăвашах анне те ватă
асатте.
Эп чăваш. Манра чупать
Чăн чăвашăн юнё.
Эп чăваш, чунра янрать
Ёмёрсен кёввийё.

Ман асанне – Анни,
Ун ашшё – Микула,
Аслашшё пулнă асаннен
Вăçли,
Паллă арăмне вăл
Муркашран илни.
Çапла вун саккăрмёш ёмёр
тёлне
Пёлетёп эп халё хам
несёлсене.

Ёçченлёх те йышлăх
Панă вăй вёсене.
Пулнă ят çёрё, вăрманё,
çаранё...
Унсăр пуçне ырă чунё,
хавалё.
Шаннă ялан хăйсен вăйё
çине,
Кётнё куллен ыррине,
çённине.

О. КЛЕМЕНТЬЕВА.

Шкулсенчен пёлтереççё

Пушар хăрушсăрлăхён уйăхлăхё

Сосновкăри пётёмёшле пёлӳ паракан тёп шкултан пушар хăрушсăрлăхён уйăхлăхё епле пыни çинчен хыпарлаççё. Пуçламăш классене вёрентекен А.И.Белова, Н.М. Федорова тата В.Н. Ипатьева ачасемпе тёрлё мероприятисем ирттерни пёлтереççё. Пушар вăхăтёнче ачасен мён тумалли пирки вёрентекен сăвă-калавсем вулани, тёрёс пётёмлетӳсем туни вёренекенсене пурнăçра пулăшё. Çакăн пек лару-тăрура çухалса каймалла маррине кёçён классенче вёренекен ачасем лайăх ăнланса юлнă.

Вăтам классем вара ку темăпа тёрлё КВН-сем, викторинăсем, калаçусем ирттернё. Е. Васильева (5 класс), Женя Михайлова (9 класс) тата Галя Кириллова (8 класс) хăйсен класёсенче çак мероприятисем интереслё те усăллă иртни çинчен çыраççё. Халё Сосновка шкулёнче вёренекенсем огнетушитель мёнле ёçленине те, пёчёк ачасемпе ватă çынсене тимлёх пирки аса илтермеллине те аван пёлеççё.

Н. НИКОЛАЕВА.

Пёлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о предполагаемом предоставлении Никитину Ивану Алексеевичу свободного земельного участка с кадастровым номером 21:17:271301:23, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Старые Мадики, ул. Школьная, общей площадью 1215 кв. м. для строительства индивидуального гаража.

Халăхран лайăх хакпа ёне, тына, вăкăр туянатпăр. Тел.: 68-5-89, 8-909-304-08-81. 3-5.

Калайкасинский «Строительный двор» реализует следующие стройматериалы: керамблоки 40х40х20 - 41 руб.; сетка-рабица в ассортименте; доски хвойные, березовые и липовые; жерди 6 м - 130 руб.; штакетник металлический - Н-125-10 - 40 руб. Срубы на заказ всех размеров с полной сборкой «под ключ». Металлоконструкции в ассортименте.
Принимает у населения картофель, металлолом.
Банные печи на заказ.
Тел.: 8-903-063-24-89, 8-906-387-86-46. 2-5.

Продаю блоки керамзитобетонные, щебень, щебень кирпичный, гравмассу, песок речной.Требуются рабочие для производства керамзитобетонных блоков. Продаем ячмень, пшеницу. Требуется водитель на автомашину КамАЗ-цементовоз. Тел.: 8-903-379-16-62, 8-919-666-55-77 (плодокомбинат). 2-3.

24 октября с 8-00 до 18-00 часов в Моргаушском РДК проводится выставка-продажа обуви из натуральной кожи производства г. Казань, г. Ульяновск, респ. Беларусь. Широкий выбор осенней, зимней коллекции.

ООО «Лотос» (д. Рыкакасы) продает мотоблоки, прицепы, плуги, косилки, а также отруби, комбикорм.
Принимает на работу слесаря-шиномонтажника, повара. Тел.: 67-3-08, 8-927-848-84-30.

СХПК ПЗ им. Е. Андреева бесплатно предлагает навоз в неограниченном количестве с территории МТФ д. Сюрла-Три, самовывоз.
Обращаться по телефону: 2-11-97.

Моргаушская районная газета «Çёнтерӳ ялавё»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 14.10.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.